Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

44 (7898) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 11-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ăмăртуллă вăй хурсан савăнма та аван

Акатуй

Ĕнер районта ĕçпе юрă тата спорт уявĕ – Акатуй кĕрлерĕ. Йĕркелӳ комитечĕ палăртнă тăрăх ку мероприятие унченхи пекех Лантăш вăрманĕн уçланкинче ирттерме йышăннăччĕ. Анчах та çанталăк тӳрлетӳсем кĕртрĕ. Çанталăк çумăрлă тăнă май районти 58-мĕш ĕçпе юрă тата спорт уявне кăçал Муркашра ирттерчĕç.

Уяв музыкăпа хореографи композицийĕпе пуçланчĕ. Савăнăçлă лару-тăрура çурхи уй-хир ĕçĕсен итогĕсене пĕтĕмлетрĕç, производствăра малта пыракансене чысларĕç, ĕç династийĕсене палăртрĕç.

Художество пултарулăх коллективĕсем, ачасемпе çамрăксен пултарулăх коллективĕсем уява илем кӳчĕç.

Карусельсĕр мĕнле уявха тата вăл? Кирек кам та уявра карусельпе ярăнма пултарчĕ.

Спортсменсемпе спорта юратакансене те кичем пулмарĕ. Спортсменсем волейболла выляссипе, кире пуканĕ çĕклессипе, турник çинче алă вăйĕпе туртăнассипе, бокс енĕпе, ирĕклĕ майпа кĕрешессипе, михĕпе кĕрешессипе вăй виçрĕç.

Чылайăшĕ тата сăн ӳкерчĕксен «Трудовые будни Моргаушского района» выставкипе, халăх пултарулăх ăстисен ĕçĕсен выставка-ярмăрккипе, ачасен ĕçĕсемпе, «Живой уголок» выставкăпа интересленсе паллашрĕ.

Акатуй уявĕ пирки тĕплĕнрех – хаçатăн çитес номерĕнче.

Çĕр-шыв халăх пĕрлĕхĕпе хăватлă

Июнĕн 12-мĕшĕ – Раççей кунĕ

1990 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче РСФСР халăх депутачĕсен пĕрремĕш съезчĕ «РСФСР патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацие» йышăннă. 1992 çултан тытăнса июнĕн 12-мĕшĕ уяв кунĕ пулса тăнă, Раççей Федерацийĕн Аслă Канашĕн постановленийĕпе çак куна «Раççей патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацие йышăннă кун» тесе палăртма тытăннă. Çав çулах кĕркунне ку уяв кунĕ пирки Ĕç çинчен калакан кодекса улшăнусем кĕртнĕ. 1998 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче Б.Н. Ельцин телевиденипе тухса калаçнă чухне асăннă куна «Раççей кунĕ» тесе уявлама сĕннĕ. Официаллă майпа ку ят 2002 çулта Ĕç кодексне çĕнĕрен йышăннă хыççăн çирĕпленнĕ.

Раççей никама пăхăнманлăх кунĕ е Раççей кунĕ – çĕр-шыв çинчи «çамрăк» патшалăх уявĕсенчен пĕри. Çак кун эпир пиншер çула тăсăлакан историллĕ, вĕçĕ-хĕррисĕр анлăшра вырнаçнă нумай халăхсен территорийĕсене, вĕсен историйĕпе культурине пĕтĕçтерсе тăракан хамăр çĕршыва, хамăрăн Раççее чыслатпăр. Çак пĕтĕм Раççей, пĕтĕм патшалăх тата пĕтĕм наци уявне çĕр-шывăн пур регионĕсенче те уявлаççĕ. Раççей хăйĕн уявне халăхсен пĕрлĕхĕпе, пĕр шухăшлăхпа кĕтсе илет. Кашни гражданинăн ӳсĕмĕнчен тата ĕç кăтартăвĕнчен килет те ĕнтĕ аслă çĕр-шывăн хăвачĕ тата тивĕçлĕхĕ.

Кашни çыннăнах Раççей хăйĕн пĕчĕк Тăван çĕр-шывĕнчен пуçланать. Çавăнпа та Раççей кунĕ пĕтĕм халăх уявĕ пулнипе пĕрлех кашнин хăйĕн уявĕ те пулса тăрать. Эпир ăçта çуралнине, ăçта ӳснине пăхмасăрах – ку вăл пирĕн Тăван çĕр-шыв. Пурте пĕрле вара эпир – пĕрлĕхлĕ те хăватлă Раççей халăхĕ.

Пирĕн гражданснчен кашниех хăйĕн опытĕнчен çакна аван пĕлет. Çирĕп те пĕр шухăшлă çемьере пурăнма лайăхрах. Кунпа пĕрлех Раççей тĕлĕшпе перекетлĕ те тимлĕ пулмалли те паллă. Пĕр шухăшпа пĕрлешнĕ халăх кăна ăна экономика тĕлĕшĕнчен хăватлă, патшалăх тытăмне çирĕп тума пултарать.

Раççейăн никама пăхăнманлăхĕ вăл – пирĕн несĕлсем çине тăрса ĕçленин итогĕ. Раççейăн никама пăхăнманлăхĕ вăл – ăна сыхласа хăварассишĕн пуçĕсене хунисен паттăрлăхĕн тĕслĕхĕ.

1990 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче йышăннă декларацие çĕнелнĕ Раççейăн аталану символĕ пулса тăчĕ, демократи обществине йĕркелеме майсем туса пачĕ.

Паян Раççейăн пирĕн аслă çĕр-шывăн çирĕп пуласлăхне тума малашлăх валли никĕс пур. Пирĕн вăй – эпир пĕрле пулнинче. Пирĕн çĕнтерӳсем – халăх пĕрлĕхĕнче. Раççей хăйĕн майĕсене курать, вĕсене пĕлет, хăйĕн вăйне шанать. Çак шанăç çĕр-шыври кашни гражданран, пĕтĕм Раççей обществинчен килет.

Черетсĕр çурт-йĕре кам тивĕçет?

Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕ

Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕн 57 статйипе пурăнмалли çурт-йĕре черетсĕр илме право пур граждансен категорине çирĕплетнĕ. Статьяри иккĕмĕш пайĕн пĕрремĕш пунктĕнче вара çирĕплетнĕ йĕркепе пурăнмалли çурт-йĕре юсасан та, реконструкцилесен те пурăнма май çук тесе йышăннă çурт-йĕрлĕ граждансен категорине палăртнă.

Çакăн евĕр положени РСФСР Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕн 37 статйинче пулнă. Анчах та хальхи редакцире пурăнма май çуккипе граждансене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтермелли нормăсене анлăлатнă.

Çапла РСФСР Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн çут çанталăк пулăмĕсене пула çурт-йĕр пурăнма май çук пулса тăнă пулсан (аварилĕх шайĕнче тесе йышăнсан) çеç гражданснене пурăнмалли çурт-йĕрпе черетсĕр тивĕçтермелли пирки каланă. Раççей Федерацийĕн кодексĕнче вара çурт-йĕре йĕркеллĕ пăхса тăманнине те шута илнĕ. Пурăнмалли çурт-йĕр пурăнма май çуккине çирĕплетнĕ йĕрке çинчен калакан положените кивĕ, аварилле шайри çурт-йĕр пирки, çавăн пекех пурăнмалли вырăнти сиенлĕ факторсен витĕмне тупса палăртни пирки сăмах пырать.

Акă çурт-йĕр пушарта çунса кайнă пулсан патшалăхăн гражданина çуртпа тивĕçтермелли-и? Çакăн пек ыйтусем татах та пулма пултараççĕ.

Гражданинăн çурчĕ ларакан вырăна (çĕр лаптăкне) патшалăх е общество нушисене тивĕçтерес тĕллевпе усă курма унăн пурăнмалли çуртне тĕппийĕрĕпе ватмалла пулса тухнă чухне патшалăх (муниципалитет) гражданина çуртпа тивĕçтерес ыйтăва татса парать (32 статья).

Çакăн пек нуша килсе тухман тата çурт-йĕре пурăнма май çук туса хунă пулсан çак ыйтăва гражданинăн хăйĕн татса памалла. Çакăнта вара РФ Гражданла кодексĕн 210 статйине те аса илтерни вырăнлă. Унта шăпах гражданинăн çурт-йĕре йĕркеллĕ тытас, юсаса тăрас тивĕçĕ пирки каланă.

Чрезвычайлă лару-тăрăва пула çурт-йĕр пурăнма май çук пулса тăнă пулсан тата гражданин пурăнмалли условисене лайăхлатма черетре тăрать пулсан çеç вăхăтлăх пурăнма маневреннăй фондран çурт-йĕрпе тивĕçтерме май пур.

Район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ.

ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Раççей кунĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп!

Çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕ – Раççей патшалăхĕн çĕнĕ историйĕнче уйрăмах паллă дата, шăпах çак кун патшалăх управленийĕн çул çыравĕн çĕнĕ страници уçалнă. Пирĕн çĕр-шыв кашни çыннах хăйне унăн уйрăлми пайĕ пек туйма пулăшакан демократиллĕ общество тăвать.

Раççей кунĕ ирĕклĕх тата демократи халăхĕсемпе, çын тата гражданин прависен приоритечĕпе тачă çыхăннă. Хальхи вăхăтра вара – экономикăпа социаллă пурнăç, культура сферисене модернизацилес тата çынсен пурнăç пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе пурнăçлакан пĕрлехи ĕçсемпе.

Çак уяв патриотлăха, гражданлăха, наци пĕрлĕхне тата çĕр-шывăмăрăн хальхи тата пуласлăхри шăпишĕн эпир пурте яваплă пулнине кăтартакан символ пулса тăрать.

Раççей патшалăхĕн аваллăхран тăсăлакан йăлийĕрки, нумай нацилле халăхăмăрăн калама çук пысăк вăй-халĕ, демократин улшăнми хаклăхĕсем пирĕн гражданснемшĕн пурăнма лайăх условисем палăртакан çĕршывăмăр малашлăхра вăйлă та телейлĕ пуласса шанма май параççĕ. Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, Тăван çĕр-шыв ырлăхĕшĕн тăвакан пултарулла ĕçĕрте çитĕнӳсем сунатăп.

М. ИГНАТЬЕВ,
Чăваш Республикин Президенчĕ.

МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!

Сире пурне те Раççей кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп. 1990 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн патшалăх суверенитечĕ çинчен декларацие йышăннăранпа 21 çул çитрĕ. РФ Президенчĕн 1994 çулхи Указĕпе килĕшӳллĕн çак куна патшалăх уявĕ тесе паллă тăватпăр.

Çак хушăра пĕтĕм общество, пурнăç çĕнелсе улшăнчĕ. Йывăрлăхсем те сахал мар пулчĕç, анчах та пуçа усмарăмăр, малаллах пĕр тĕллевлĕн ĕçлерĕмĕр. Пирĕн халăх чунпа çирĕппине историн кашни страници çирĕплетсе парать. Аслă ăру çыннисенчен тĕслĕх илетпĕр эпир. Кирек епле лару-тăрура та кирлĕ пĕтĕмлетӳ туса тĕрĕс утăмсем тумаллине асра тытатпăр. Малашне те пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнасчĕ, ĕçлесчĕ. Вара район, республика, Раççей тата та ытларах аталанĕ, тата та вăйлăрах та пуянрах пулĕ. Умри тĕллевсене пурнăçлас тесе малалла та пĕрлех тăрăшасчĕ.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм кун-çул сунатăп. Малашлăх яланах уçăмлă та шанчăклă пултăр. Ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр.

Ю. ИВАНОВ,
район администрацийĕн пуçлăхĕ.

Райадминистрацире

Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи июнĕн 2-мĕшĕнчи 495 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Андрей Геннадьевич ПАВЛОВА**, Ильич яч. хис. хуçалăх трактористне;

– нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн:

– **Арист Семенович ГЕРАСИМОВА**, акционерсен «Моргаушский автомобильно-технический сервис» уçă обществин строительство участокĕн электрогазосварщикне;

– **Владимир Илларионович НИКОЛАЕВА**, акционерсен «Моргаушский автомобильно-технический сервис» уçă обществин мастерской слесарьне.

Саламлатпăр!

Юратнă мăшăра, аттене, кукаça, хăтана – Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне кĕрекен Ойкас ялĕнче пурăнакан **Валерий Лазаревич КИРИЛЛОВА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăхлачисем.

Çырăнтару

Хаклă вулаканăм!

Райхаçата иккĕмĕш çур çултан илсе тăмă çырăнтарас тапхăр малалла пырать. Çырăнтару хакĕ унченхиех – 191 тенкĕ те 70 пус (ултă уйăха).

Хаçат редакцийĕ.

Ответлăх туйăмĕ пысăк

Сăн ӳкерчĕкре эсир акционерсен «Чувашсетьгаз» уçă обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн ĕçченĕсене – Ю.Н. Чернов водитель-слесарьпе И.О. Мочалов слесаре куратăр. Хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçланипе палăрса тăраççĕ вĕсем.

В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Ырă йăла-йĕрке

Çатракассинче – Урам кунĕ

Ял çыннисем ĕçлеме кăна мар, йĕркеллĕ канма тата савăнма та пĕлеççĕ. Уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май кашни ял тăрăхĕн территорийĕнчех Акатуйсем, Ял кунĕсем йĕркелесси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Çакă вăл пирĕн аттесемпе асаттесен ырă йăли-йĕркине аталантарни пулать. Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Çатракасси ялĕнче вара Урам кунне ирттерес тенĕ. Р.К. Соловьева пуçарăвне Привольная урамра пурăнакансем хапăл туса йышăннă.

«Авал пирĕн аттесемпе асаттесем çурхи уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн пĕрле пухăннă. Çак йăла халĕ те пырать. Анчах та пур ватă çын та ял уявне каяймасть. Урама вара тухаççех. Çапла вара хамăра валли те, ыттисем валли те уяв йĕркелес терĕмĕр»,– каласа парать ку уяв пирки Роза Ксенофонтовна.

Уяв чăннипех те ăннă темелле. Чăвашсен йăлипе пĕтĕм урамĕпе шӳрпе пĕçернĕ. Роза Ксенофонтовна тата ыттисем кукăль пĕçернĕ, квас, сăра вĕретнĕ. Мăн Токшикри Культура çурчĕ çумĕнчи «Тăванлăх» халăх фольклор ансамбльне хăнана чĕннĕ.

Мĕнле уяв-ха тата вăл парнесемсĕр? Жюри членĕсем малтанах урам хушшипе пăхса çаврăннă, «Чи хитре кил-çурт», «Чи чечеклĕ палисадник» номинацисенче çĕнтерӳçĕсене палăртнă. Ялта пурте пĕр-пĕрне пĕлеççĕ. «Чи туслă çемье» номинаци çĕнтерӳçисем те парнесĕр юлман. Урамри чи çамрăкки тата чи асли те парнесене тивĕçнĕ.

Чĕннĕ артистсем урамра пурăнакансене илемлĕ юрăсемпе, ташăсемпе савăнтарнă. Асаттесемпе асаннесем те чăтса тăрайман ташламасăр. Купăс калакансем кăна тăваттăн пулнă. Ю.Л. Николаевпа Ю.А. Ершов наставниксем çине пăхса çамрăк купăсçăсем В.Н. Смирновпа А.Г. Яковлев та чăтса ларайман. Ачасем те пĕрле савăннă: юрланă, сăвăсем каланă.

Чи кирли вара – пурте кăмăллă юлни. Тĕрĕсех палăртать район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов: эрехсĕрех уявсене хаваслă та савăнăçлă ирттерме пулать. Çатракассинчи Привольная урамра пурăнакансем çакна хăйсен тĕслĕхĕпе çирĕплетсе панă. Роза Ксенофонтовна хăй те савăнăçне пытараймасть: «Эпĕ 67 çулта кăна-ха. Ватăлма вăхăт çук. Кăçал Урам кунне пуçласа ирттертĕмĕр. Çитес çул вара программăна спорт ăмăртăвĕсене те кĕртме шутлатпăр. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.А. Кожевников сцена йĕркелеме пулăшсан тем пекехчĕ»,– тет вăл.

Пирĕн хушăра Р.К. Соловьева пенсионерка пек пуçаруллă çынсем пулсан питех те аван. Роза Ксенофонтовна – районти ветерансен хорĕн членĕ. Сăвăсем, юрăсем çырать, юрлама юратать, ыттисем те тĕрĕс пурнăç йĕрки тытса пыччăр тесе тăрăшать.

Л. ТУКТИНА.

Хамăр пурнăç хамăр алăрах

Иртнĕ тунти кун район администрацийĕ çумĕнчи право йĕркине пăсассине хирĕç кĕрешекен профилактика тата право тĕлĕшĕнчен йĕркелĕхпе тивĕçтерекен комиссисен канашĕсен пĕрлехи ларăвĕ иртрĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ, асăннă комиссисен председателĕ Ю.А. Иванов ертсе пычĕ.

ПĔР АЧА ТА ПРЕСТУПНИК ПУЛСА ÇУРАЛМАСТЬ...

Чи малтан ларура районти çул çитмен çамрăксем йĕркене пăсни çинчен ыйту пăхса тухрĕç. Çакăн сăлтавĕ те ахальтен мар. Иртнĕ çул 5 уйăхра çул çитмен çамрăксем пĕтĕмпе те 4 преступлени тунă пулсан, кăçал вĕсен шучĕ ытларах. Москакасси ял тăрăхĕнчи çул çитмен 2 çамрăк хăйсем кăна вăрлассипе 5 преступлени тунă. Районти шалти ĕçсен пайĕн ертӳçин çумĕ, обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн ертӳçи В.А. Григорьев çул çитмен çамрăксем тунă кашни преступлени çинче чарăнса тăчĕ.

Çакă та шухăшлаттарать. Пĕтĕмпе çулталăк пуçланнăранпа милици ĕçченĕсем право йĕркине административлă майпа пăснă тĕслĕхсенчен 16-шне çул çитмен çамрăксем эрехсăра ĕçнĕшĕн, обществăлла вырăнта ӳсĕр çӳренĕшĕн протокол çырнă. Çак тĕслĕхсем ашшĕ-амăшне хăйсен тивĕçĕсем çине тата темиçе хут тимлĕрех пăхмалли çинчен каласçĕ.

Вырăнти общественноç ячĕпе те ӳпкелешмелли çук мар-ха. Виталий Алексеевич каланă тăрăх милици ĕçченĕсем шăмат кунсенче ялти Культура çурчĕсемпе клубсенче рейдсем ирттереççĕ. Анчах та вĕренӳ çулĕнче каçхи 10 сехет хыççăн та вĕсенче çул çитмен çамрăксем пулнă иккен. Культура вучахĕсен ертӳçисенчен вара хăшĕсем вĕсене вăхăтра киле кăларса ярас вырăнне милици ĕçченĕсем пырсан хыçалти алăкран тартнă тĕслĕхсем те пулнă иккен.

Ял тăрăхĕсенчи профилактика тата çемьесемпе ĕçлекен комиссисем те çителĕклĕ ĕçлеççĕ теме йывăртарах пек туйăнать. Кашни кĕçнерни кун акă ял тăрăхĕсенче профилактика кунĕсем иртеççĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, йĕркелӳпе кадрсен, право ыйтăвĕсемпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай ертӳçи, районти çул çитмен çамрăксемпе тата вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комисси ертӳçи Л.Ю. Тарасова каланă тăрăх çав кунсенче районти 276 çемьере пулнă. Çав профилактика кунĕсем хыççăн вырăнти çӳлерех асăннă комиссисем ăнăçсăр çемьесене тăтăш çӳренĕ теме çук. Çавăнпа та Лилия Юрьевна ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене çак канашсен ĕçне лайăхлатма чĕнсе каларĕ. Районти çул çитмен çамрăксемпе тата вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комисси ларăвĕнче 87 ашшĕ-амăшне хăйсен тивĕçне кирлĕ пек пурнăçламаншăн административлă майпа явап тыттарнă.

Халĕ акă çуллахи каникул пуçланчĕ. Виталий Алексеевич çак тапхăрта ашшĕ-амăшĕсен патрульне йĕркелени вырăнлă пулмаллине палăртрĕ. Унта çавăн пекех учительсене те кĕртмелле, милици ĕçченĕсем те пĕрле пулаççĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ку ĕçе психологсене те явăçтарма сĕнчĕ. Мĕншĕн тесен ачана тӳрĕ çултан пăрăнассинчен вăхăтра çăласси унăн чунчĕри патне тĕрĕс çул тупнинчен те нумай килет.

Хăш-пĕр çул çитмен çамрăксем тĕрĕс çул çине тăма шутламанни те канăç памасть. Çул çитмен хĕр ачана акă паян судра пăхса тухнă пулсан, тепĕр кунне вăл каллех преступлени тăвать. Кун пек тĕслĕх те пулнă. 11-мĕш номерлĕ уголовнăй исполнительнăй инспекцин ертӳçи В.В. Кожевников шучĕпе çул çитмен çамрăксене йĕркене пăснăшăн обязательнăй майпа ĕçлеттермелле туни çителĕксĕр иккен. «Вĕсене çирĕпрех наказани памалла», – тет вăл. Пĕтĕмпе вара ку инспекцинче çул çитмен 4 çамрăк учетра тăрать.

Ку темăна çак шухăшпа вĕçлес килет. Районти пĕр шкулта каникул мĕнпе асра юлни çинчен сочинени çырма хушсан пĕр класри 3 ача çапла çырнă. «Пирĕн класри М. пирĕн класран кайни питĕ лайăх. Халь ĕнтĕ лăш! сывласа яратпăр», – тесе çырнă.

Çак тĕслĕх обществăн пысăк пайĕ саккунпа килĕшӳллĕн пурăнмаллине ăнланнине, çитĕнекен ăру çакна ăнланса ӳснине кăтартса парать.

– Йĕркене пăсакансем хăйсем тунă утăмсемшĕн хăйсене аван мар туйччăр. Çакăн пек пурăнма тăрăшмалла пирĕн, çакăн пек условисем туса памалла. Чи малтан хамăрăн ырă тĕслĕх пулмалла, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ларура.

Ача преступник пулса çуралмасть вĕт. Вăл мĕнле лару-тăрура ӳснинчен, камсем мĕнле воспитани панинчен, мĕнле тĕслĕх панинчен пуçланать унăн пурнăç çулĕ. Çавăнпа та алла эрех черкки тытиччен килте паян ман ача выçă лармасть-и тесе шухăшламалла пуль. Ирĕк пурнăçра ют арçынсемпе е хĕр арăмсемпе «пылак» пурнăç шыриччен ман çак утăм ман ачан пурнăç çулне пӳлмести-ха тесе шутласа илмеллех пуль. Преступлени çулĕ çине тăнă ачасенчен пурте тенĕ пекех ăнăçсăр, тимлĕх çитмен çемьесенчен пулни те çак шухăш йăнăш маррине çирĕплетсе парать. Хамăр алăпах хамăр ачасен телейне хуплас марччĕ...

ПУШАР НИКАМА ТА ТИРКМЕСТ ТЕ, ХĔРХЕНМЕСТ ТЕ

Пĕрлехи ларура сӳтсе явнă тепĕр ыйту та – çивĕччисенчен пĕри. Çу кунĕсем çитнĕ май пушар çине пушар тухма пуçлать. Районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн ертӳçи И.Н. Смирнов каланă тăрăх çулталăк пуçланнăранпа районта 19 пушар пулчĕ те ĕнтĕ. Пушарпа кĕрешмелли хатĕрсем яланах хатĕр пулни кунта пысăк пĕлтерĕшлĕ. Илья Николаевич огнетушительсене вăхăт-вăхăт силлесе илмелли пирки асилтерчĕ. Унсăрăн унăн усси пулмасть: шалти шĕвек хытса ларма пултарать. Пушар машинисен йышĕ районта хушăнни вара питĕ лайăх. Орининпа Юнкă ял тăрăхĕсене вĕсене илсе килнĕ ĕнтĕ. Ку ыйтупа тата тепĕр 3 заявка пур. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вырăнсенче пĕвесем патне пушар машинипе пыма çулсем тумаллине палăртрĕ.

Пушарсенчен ытларахăшĕ кил хуçисем ӳсĕр пулнипе, ачасем шăрпăкпа вылянипе тата электропралуксем кивелсе кайнипе çыхăннă. Çавăнпа та Юрий Александрович ку енĕпе халăхпа ăнлантару ĕçне ирттермелли çинчен каларĕ.

– Электропралуксене вăхăтра улăштармалли пирки асилтерсех тăмалла, – терĕ.

Çавăн пекех шăрăх çанталăкра вăрмана тĕрлĕрен уявсем ирттерме каймалла маррине те асран кăлармалла мар пирĕн. Ахальтен каламаççĕ вĕт сыхланакана Турă та сыхлать тесе.

КАНИКУЛ ХАВАСЛĂ, УСĂЛЛĂ ИРТТĔР

Шкул ачисен савăнăçлă та хаваслă вăхăт – çуллахи каникул пырать. Шăпах вĕсен канăвне усăллă ирттерессине йĕркелес ыйту та пĕрлехи ларăвăн кун йĕркинче пулчĕ. Районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи З.Ю. Дипломатова ларура çакна палăртрĕ. Районти шкулсем çумĕнче сывлăха çирĕплетмелли 16 лагерь тата 23 профильлĕ лагерь ĕçлеме пуçларĕ. 6 профильлĕ лагерьте тата 2-мĕш смена та пулать. Çапла вара районти 1749 ача çуллахи канăва усăллă ирттерет, ку вăл районти пĕтĕм шкул ачин йышĕн 47 проценчĕ пулать. Çак тĕллевпе район бюджетĕнчен 1 млн. та 293,3 пин тенкĕ укçа уйăрнă.

Ку çеç те мар, районти тепĕр 204 ача хăйĕн сывлăхне хула çумĕнчи лагерьсенче çирĕплетĕ. 59 ача Сĕнтĕрвăррри районĕнчи «Белые камни» лагерьте пĕрремĕш сменăра канать те ĕнтĕ. Муркаш ачисем кăçал çавăн пекех хамăр районти «Ильинский» лагерьте те сывлăхĕсене çирĕплетĕç. Путевкăсем туянма район бюджетĕнчен 1 млн. та 706,7 пин тенкĕ уйăрнă.

Чăваш Республикинчи Роспотребназдор Управленийĕн пирĕн районти тĕп специалисчĕ Г.Г. Воробьева пирĕн районта ачасен канăвне усăллă йĕркелессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ тесе тĕрĕсех калать. Республикипе ачасен сывлăхне çирĕплетмелли учрежденисен йышĕ самаях сахалланчĕ пулсан, пирĕн районта ав тĕрлĕрен лагерьсенче иртнĕ çулхи чухлех ача канать. Хамăр районти лагерьсенчен илнĕ тĕрлĕ анализсем лайăх пулни те ачасен сывлăхĕпе канăвне районта пысăк тимлĕх уйăрни çинчен калать.

Чăваш Республикинчи Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă та ачасем çуллахи вăхăтра сывлăхĕсене çирĕплетеççĕ. Унăн ертӳçи Н.П. Петрова каланă тăрăх Чуманкассипе Москакасси шкулĕсем çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерьсенче социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă çулсеренех сахал тупăшлă, нумай ачаллă çемьери ачасем канаççĕ. Кăçал та вĕсенче тата тепĕр 30 ача канать. Ку вăл çӳлерех асăннă 1749 ача çумне хушăнакан кăтарту. Хула çумĕнчи «Золотой колос» лагере социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă 1 сменăна тата 10 ача тухса кайрĕ. Тӳлессе те вĕсем путевкăн 5 процентне çеç тӳлеççĕ. Тата тепĕр 2 ача çак пай урлă хамăр районти «Ильинский» лагерьте канма тӳлевсĕр путевка илчĕ. Апла пулсан канăва усăллă ирттерекен ачасен йышĕ татах та ӳсрĕ.

ИРĔК ПАНĂ ВЫРĂНТА КĂНА ШЫВА КĔМЕЛЛЕ

Çулла тухса тăракан тепĕр çивĕч ыйту вăл – шыв çинчи хăрушсăрлăх.

Ларура ку ыйтăва пăхса тухнă май район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен сектор пуçлăхĕ Н.П. Милютин кашни ял тăрăхĕнче официаллă майпа шыва кĕме ирĕк панă вырăн пулмаллине палăртрĕ. Çавăнпа та вăхăта сая ямасăр çакăн пек вырăнсене палăртмалла, хăрушсăрлăх енĕпе пăхса тухса тĕпчемелле вĕсене. 12 ял тăрăхĕ ку ыйтупа республикăри шыравпа çăлав ушкăнне заявленипе тухнă. Асăннă ушкăн пĕр кунта çак ял тăрăхĕсенче 12 пĕвене тĕрĕслет. Тĕрĕслев хыççăн шыва кĕме ирĕк панă вырăна йĕри-тавра палăртса тухмалла.

– Çынсем шывра инкек ан курччăр тесе хамăртан килнине пирĕн йăлт вăхăтра тумалла, – терĕ Юрий Александрович.

Çавăнпа та хаçат вулакансене çакăн çинчен асăрхаттарас килет. Сирĕн ял тăрăхĕнче шыва кĕме официаллă майпа ирĕк панă вырăнта кăна шыва кĕмелле. Çав вырăнта палăртнă чикĕрен тухса каймалла мар.

ЭРЕХ УЯВА ПĂСАТЬ КĂНА

Пĕрлехи лару хыççăн район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашлăвне ирттерчĕ. Районти Акатуй уявне хатĕрленсе ирттересси çинчен каласнипе пĕрлех унта Юрий Александрович ял уявĕсем ирттерни çинче те чарăнчĕ. Çак уявсене кашни ял çыннине активлăн явăçтармаллине палăртрĕ. Пирĕнтен кашниех унта активлăхпа палăрса уяв эрехсĕрех интереслĕ иккенне туйса илтĕр. Район администрацийĕн пуçлăхĕ çакăн пек кăтартуллă уява пĕр ял тăрăхĕнче ирттерме кирлине палăртрĕ. Унта пур ял тăрăхĕн пуçлăхĕсем те пырса курччăр.

Кун пек уявсем кирлине тата уяв эрехсĕрех илемлĕ иртнине Çатракасси ял тăрăхĕнчи Привольная урамри çынсем хăйсемех курса ĕненчĕç. Паянхи хаçат номерĕнче ку уяв пирки çӳлтерехре уйрăм хыпар та пур. Пуçласа çак уява йĕркелесе ирттернĕ 67 çулхи Р.К. Соловьева вара хăй кун пирки çапла калать:

– Ним тумасăр килте ларсан ним те пулмасть. Çынсем пĕрле пуçтарăнса савăнасшăн. Халь пĕрре туса пăхрăмăр урам уявне, тепĕр çул тата та интереслĕрех ирттересшĕн-ха. Никам та ӳсĕр пулман. Пурте кăмăллă юлчĕç, – тет вăл.

Апла пулсан тĕслĕх илме инçех те каймалла мар. Хамăрăн йĕркелемелле те çакăн пек уявсене, хамăрăнах кăтартса памалла хамăр илемлĕ пурăнма пĕлнине. Ларура Раççей кунĕпе Çимĕк уявне ирттерессине пăхса тухрĕç. Православи тĕнĕ ваттисене асăнмалли кун масар çинче эрех ĕçнине те сивлет. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов калашле, чи кирли – ваттисене чиркӳре асăнтарса масар çине кайни, вĕсемпе шухăшра каласни пĕлтерĕшлĕрех.

Апла пулсан ларура мĕн каласнине пурнăçламалли кăна юлать. Каярахпа вара пĕр лайăха хăнăхсан каялла анса ларас килмест. Çапла вĕт. Пурнăçа вăхăтра хакласа ун илемне курма пĕлмелле пирĕн. Эрех вара ахаль те йывăр шухăшсăр сахал пулакан пуçа татах та проблемăсем хушса парать кăна.

Л. ПАВЛОВА.

Кил тата хушма хуçалăх

Утарта

Утарта çўçесен йăхĕ 10-ран, вĕренесен 4-ран, акацисен 20-рен, катăркассен 3-рен кая пулмалла мар. Çак йывăçсем çук пулсан вĕсене лартса ўстерме тăрăшмалла.

И. МАДЕБЕЙКИН, профессор.

Çĕртме уйăхне кĕтĕмĕр

Çĕртме уйăхĕ – хĕр уйăхĕ тенĕ авалах. Çĕрĕ кĕске те çутă, сад пахчисемпе çарансем çеçкеленеççĕ, кайăксем савăнса юрлаççĕ. Çĕртме – хыт кукар: тыр-пул çитĕнтерет, çулталăклăх хатĕрлет, çиме памасть. Çĕртмери ăшă тиртен çĕленĕ кĕрĕкрен те ырăрах. Çуллахи вăхăт çумăрлă пулсан хĕл юрлă та сивĕ килет. Çĕрле тата ирхине лăпкă пулсан çанталăк пăсăлмасть.

Çĕрле вăйлă сывлăм ўксен кăнтăрла хĕвеллĕ кун пулмалла. Иртенпех хĕвел шупкан, тĕтреллĕ курăнсан каç еннелле çумăр кĕт. Ирхине шыв çумĕпе тĕтре сарăлсан вара кăнтăрла хĕвеллĕ кун пуласса. Каç еннелле асамат кĕперĕ курăнсан вăрăма кайнă сăлпăранлă çанталăк иртсе каймалла. Çумăр умĕн кашкăр çырли çеçкин шăрши вăйланать. Асамат кĕперĕн тĕсне асăрха: симĕсси ытларах пулсан – çумăра, сарă тĕс ытларах-тăк – уяра, хĕрли ытларах пулсан – çиллĕ, шăрăх çанталăка, кăвак тĕс нумайрах – çил те, çумăр та вăйланасса.

Çĕртме çарансене çавапа хăратать. Ăвăс кăчки нумай пулсан сĕлĕ тухăçлăхне шантарать. Ăвăс папакĕсем мăнтăркка пулсан урпа ăнăçлă çитĕнмелле. Çĕмĕрт çурăлнă вăхăтра вăлтана çупах лайăх туртать. Юман çулçи сарăлнă вăхăтра çăрттан тытма меллĕ.

Çăлтăрсем симĕсрех тĕспе ялтăртатсан лайăх çанталăк часах пăсăлмĕ. Каçах ўкнĕ сывлăм ирччен çухалсан çанталăк пăсăласса систерет. Асамат кĕперĕ çумăр иртсен хăвăртах пĕтсен – уяр çанталăка, нумай вăхăт пĕтмесен – сăлпăрана, ирхине курăнсан – çумăр пуласса. Шĕвек пĕлĕт шыв пек юхма тытăнсан тепĕр темиçе сехетрен çил вăйланмалла. Вăрăма кайнă лăпкă çанталăк хыççăн вăйлă çил тухсан çумăр хăваласа килме пултарать.

Кăвайт тĕтĕмĕ питĕ мăкăрланса куçа çиет, çĕр çумĕпе сарăлать, вучахри кăвар тĕлкĕшсе çутăлать – çанталăк улшăнасса. Çумăр мĕн тери вĕтĕ, çав тери вăраха каять. Пысăк шурă пĕлĕт татăкĕсем пăр çутарма пултараççĕ. Каç умĕн пуçланнă çумăр талăкран ытла çумасть.

Лайăх çанталăк умĕн каюрасем çĕр çине çиеле тухаççĕ, çумăр умĕн тăпра ытларах çиеле кăлараççĕ. Сурăхсем çумăр умĕн макăра-макăра пĕр-пĕрин хыççăн чупкалаççĕ.

Йĕпе-сапа умĕн чăх чĕпписем амăшĕ патне пытанма васкаççĕ. Шăпчăк çĕрĕпех юрласан хĕвеллĕ кун пуласса шантарать. Çумăр умĕн кăвакалсем татти-сыпписĕр шывран чăмса тухса çунаттисене çапаççĕ. Кураксем сывлăшра явăнса выляни – лайăх çанталăка.

Ирхине пыл хурчĕсем «ĕçе каймасăр» вĕллере сĕрлесе лараççĕ-тĕк – часах çумăр çитессе кĕт. Çумăр умĕн пулăсем шывран сике-сике тухса выляççĕ. Шапасем сивĕтес умĕн шăпăрт лараççĕ, лайăх çанталăка уççăн кваклатаççĕ. Çумăр пулас умĕн каçхине кăвайт çине хурт-кăпшанкă нумай вĕçет. Пыл хурчĕсем вĕллерен тухса вĕлле çумне купаланса çыпçăнсан – шăрăх çанталăка, ирех чечексем çине вĕçсе кайсан – лайăх кун пуласса. Кăткă тĕмми тавра нумай кăткă тухса тулсан ырă çанталăка шан. Кăткăсем йăвине нўрĕ те сулхăн вырăна купалаççĕ пулсан çулла уяр, типĕ çанталăк пуласса. Типĕ çанталăк умĕн эрешменсем хĕвел аннă чух карри çинче уçăра лараççĕ, йăвине пытанмаççĕ. Çумăр пуçланас умĕн кăткăсем васкасах йăвана кĕмелли шăтăксене питĕреççĕ. Вăрăм тунасем кĕтĕвĕпе сĕрлесе вĕçеççĕ пулсан чипер çанталăк пуласса шан. Шапа кăнтăрла кваклатса çумăра чĕнет.

Чăваш календарĕнчен.

«Пирĕн çемье ĕçрен пăрăнмасть»

...Çуллахи пĕрремĕш уйăх. Тĕнче ешĕл тум тăхăннă вăхăт. Çывăхри ĕшнере шăпчăк юрлать. Унтах куккук çул шутлать. Çуллахи илемлĕхе малларах çулнă курăкăн утă шăрши пуянлатать. Çумăрлă кунсем пулсан та малашлăха чĕнекен самант. Çамрăклăх вылявĕ. Пуçра çĕнĕрен те çĕнĕ ĕмĕтсем çураласçĕ...

Урампа пыракан çамрăк хĕрарăм хăйĕн пурнăç çулне тупнă ĕнтĕ. Унăн юратнă çемье, савнă мăшăрпа тыткăна илекен хĕрпе ывăл пур. Çыхăну уйрăмĕнчи юратнă ĕçĕ тата килти хушма хуçалăхĕ – пурнăç пуянлăхĕ.

Ильинка ял тăрăхĕнчи Макаçи ялĕнче пурăнакан Неонилла Нестеровна Васильевăпа Тренккăри çыхăну уйрăмĕн пўлĕмĕнче калаçатпăр **(сăн ўкерчĕкре)**. Калаçу пуçламăшĕнчех манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм кăмăллă çын пулни палăрчĕ. Кулленхи пурнăçра хамăр йĕри-тавра ырă çынсем ытларах пулсан пурăнма аван çав. Вĕсемпе курса калаçсан чун çĕкленет, çĕнĕ тĕллевсем çураласçĕ, ĕçлес кăмăл ўсет. Ырă кăмăллă çынсенчен тĕслĕх илсе йывăрлăхсене пăхмасăр малтан мала талпăнас килет.

– 4 ачаллă колхозниксен çемйинче çуралса ўсрĕм. Эпĕ 2-мĕшĕ. Килти хушма хуçалăхри ĕçсене ыттисем çине йăвантарса ларман. Атте-аннерен тĕслĕх илсе никам хушмасăрах ачаллах ĕçе хăнăхса пыма тиврĕ. Ĕçрен хăраманни вара пурнăçра каярахпа пысăк тĕкĕ пулчĕ. Тавах аттепе аннене кĕçĕн çулсенчех ĕçпе туслаштарнăшăн, – тет паян Неонилла Нестеровна.

Макаçи ялĕнче çуралса ўснĕ, кунтах çемье çавăрнă хĕрарăм унччен Тренккăри çыхăну уйрăмĕн операторĕнче вăй хунăскер паян хăй уйрăм ертўçинче тăрăшать.

– Кунĕпе кунта вăй хуратăр пулсан килти хушма хуçалăхра епле ĕлкĕретĕр-ха е ăна тытмастăр? – ыйтатăп компьютер умĕнче ĕçлекен хĕрарăмран.

– Ялта хушма хуçалăх тытмасăр май килмест. Килти хушма хуçалăх вăл хушма тупăш та, аталану çул-йĕрĕ те. Ачаллах килти ĕçе хăнăхнăран ĕне тытасси, пăру ўстересси, чăх-чĕппе хур-кăвакал ĕрчетесси маншăн нихăçан та çĕнĕлĕх пулман. Тавах Турра, 4 ача ўстернĕ хуняма Лидия Никоноровна та ачисене ĕçе юратса ўстернĕ. Çавăнпа та Ильинкăри Кану çуртĕнче ĕçлекен Сергей мăшăрăм килте яланах пулăшать. Пĕрле пулса Костьăпа Настьăна та выльăх-чĕрлĕхпе чăх-чĕп патĕнчи, пахчари ĕçсене явăçтаратпăр, – кăмăллăн калаçать пĕлтĕртенпе çыхăну уйрăмне ертсе пыракан хĕрарăм.

Ĕçрен ютшăнман çемье кун йĕркипе тан пырса 2 гектар та 48 сотка пай çĕрĕ илнĕ. Çак çĕр лаптăкĕ çамрăк мăшăра ĕне тытма та, пăру ўстерме те, чăх-чĕппе хур-кăвакал ĕрчетме те пысăк тĕкĕ.

Анатолий БЕЛОВ.

Питех те усăллă хурт-хăмăр

Пĕлни пăсмасть

Çĕр çинче пурăнакан миллиона яхăн хурт-кăпшанкăран çыншăн чи усăлли – пыл хурчĕ. Вăл этеме тĕлĕнмелле чаплă, тĕрлĕ чир-чĕртен сыватакан тутлăхлă пыл парать.

Çĕр çинчи пур халăх та пылăн сиплĕхлĕ паллисене ĕлĕкренех пĕлнĕ. Халăх медицини кăна мар, хальхи медицина науки те нумай чиртен сипленĕ чухне пылпа усă курать. Пĕр кашăк пыл пĕр тумлам сывлăх парать. Пыл йўçĕ таблетка мар, ачасемшĕн те, çитĕннисемшĕн те питĕ тутлă эмел пекех. Вăл вăй кĕртет, организма чир-чĕртен хўтĕленме пулăшать. Японецсем калашле, пыл вăл – çут çанталăк продукчĕсен патши.

Пылсăр пуçне пыл хурчĕсем ăвăс тăваççĕ. Пыл шĕвĕ ылтăн пек пулсан, ăвăс – ылтăн чăмакки. Ахальтен мар унпа ют патшалăхсемпе суту-илў тунă чухне укçа вырăнне усă курнă.

Ăвăспа радиоэлектроникăра, металлурги, тир-сăран, пиравăр промышленноçĕнче, космонавтикăра, паха сортлă хут тунă çĕрте усă кураççĕ.

Ку çеç те мар. Пыл хурчĕсем пухакан чечек тусанĕ, хурт амин сĕчĕ, пыл хурчĕсен çилĕмĕ (прополис) – питĕ усăллă продуктсем. Прополис хăш-пĕр сиенлĕ микробсене пĕтерме пултарать. Унпа медицинăра анлă усă кураççĕ.

Чечек тусанĕ вара – тĕлĕнтермĕш продукт. Вăл пыл пекех хуртсемшĕн питех те тутлăхлă апат пулса тăрать. Пылпа пуянлатнă чечек тусанне юн сахаллипе аптăранă чухне, çын вăйсăрлансан çиме сĕнеççĕ.

Ял хуçалăх культурисене шăркалантарас, çут çанталăка сыхлас енĕпе пыл хурчĕсен пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк.

В. СЕРГЕЕВ, хурт-хăмăр ĕрчетекен.

Штраф виçисем палăрмаллах ўсрĕç

Вырăнсенче пушартан сыхланасси пирки

Районти пушар надзор ĕç-хĕл пайĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан Андрей Васильевич ЕФИМОВ сăмахĕнчен хамăр енре тухакан пушарсен ытларах пайĕ килти хушма хуçалăхпа çыхăнни палăрать. Çавăнпа та çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕнче йышăннă «Пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе Раççей Федерацийĕн Административлă право йĕркин кодексне улшăнусем кĕртесси çинчен» Федераллă Саккун нумайăшне шухăшлаттарма кирлине палăртмалла. Çĕнĕлĕхсем пушар хăрушсăрлăх правилисене пăснăшăн тивекен штрафсен виçипе çыхăннă. Асăннă кунран вĕсем палăрмаллах ўсрĕç. Çакăн пирки пирĕн малалли калаçу.

– Андрей Васильевич, улшăнусем палăрмаллах пысăк-и? Районта пурăнакан кашни çыннах пырса тивеççĕ-и çĕнĕ саккун йĕркисем?

– Эсир асăннă саккун çĕртме уйăхĕн 17-мĕшĕнче ĕçлеме пуçласси пирки Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Д. Медведев алă пусрĕ. Çапла вара тепĕр эрнерен пушар хăрушсăрлăх правилисене пăсакансем тата вĕсене пăхăнманнисем валли административлă айăплавăн çĕнĕ виçисем «ĕçлеме пуçласçĕ».

– Шухăшлаттарать. Апла пулсан пушар хăрушсăрлăхĕ çине пўрне витĕр пăхаканăн кĕсйи самай çўхелес хăрушлăх пур. Эпĕ тĕрĕс шухăшлатăп-и?

– Тĕрĕсех. Çакна тума иртнĕ çулхи вăрмансенчи пушарсем, обществăлла çуртсенче час-час тухакан вут-çулăм, «хĕрлĕ автан» тыткăнĕнче пурнăçран вăхăтсăр уйрăлакансем йышланни, пушарсен ытларах пайĕ хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнманран килти хушма хуçалăхсенче тухни ыйтать. Çулсемпе, ĕмĕрсемпе тунă-пухнă пурлăх саманторах кĕл пулса çилпе вĕçни Раççее çĕнĕ проектсене пурнăçа кĕртме чăрмав пулса тăрать.

– Çĕнетнĕ Кодексра пушар хăрушсăрлăхĕпе çирĕпрех ыйтма пуçлама никĕс хывни тĕрĕсех-и? Мĕн шутлатăр кун пирки?

– Пĕрисем пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăсса ыттисемшĕн хăрушлăх кăларса тăратнине эпир кашни пушар сўнтерме тухмассерен куратпăр. Ўсĕр арçын кил-çуртра пирус туртса пушар кăларнăшăн пускил айăплă-и вара? Кунашкал тĕслĕхре нумай чух кўршĕн хуралти е кил-çурчĕ те кĕлленет. Пĕр пĕрлешўллĕ хуçалăхра 2 пушар машини тытаççĕ пулсан, теприсем пуррине те ĕçлеттерейменнишĕн, çавна пула ирĕке кайнă вут-кăварпа кĕрешме пулăшу вăхăтра çитейменнишĕн тата?..

– Андрей Васильевич, çĕнелсе улшăннă айăплав виçисемпе паллаштарăр-ха пирĕн вулакансене.

– Паллаштармасăр майĕ те çук. «Пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе Раççей Федерацийĕн Административлă право йĕркин кодексне улшăнусем кĕртесси çинчен» Федераллă Саккун йышăниччен транспорт çинче пушар хăрушсăрлăх правилисене пăсакан уйрăм водителе 500–1000 тенкĕ, должноçри çынна 1000–2000 тенкĕ штрафланă пулсан, çĕнĕ саккун маларах асăннă йĕркепе 1500–2000 тата 4000–5000 тенкĕ ыйтать. Патшалăх пушар надзор ĕçне-хĕлне туса пыракан орган саккунпа килĕшўллĕ панă предписание вăхăтра пурнăçламаншăн ĕнер кăна гражданселе, должноçри çынсене тата предприяти-организацисене (малалла та айăплав хисепĕсем çак йĕркепе пулаççĕ. – **Ред**.) административлă йĕркепе 300–500, 1000–2000, 10000–20000 тенкĕлĕх ответ тыттарнă пулсан, çĕнĕ саккунпа çак виçесем 1500–2000, 3000–4000, 70000–80000 тенкĕне çитрĕç.

– Эпĕ илтнĕ тăрăх çĕнетнĕ КоАПăн 20.4 статйинче пысăк улшăнусем пур. Каласа памăр-ши?

– Ку статья пушар хăрушсăрлăх требованийĕсене пăснишĕн айăплав виçисем палăртать. Статьяра 3 çĕнĕ пункт хушăннипе пĕрлех штрафсен виçисем те палăрмаллах ўснĕ. Вĕсене тўлессинчен пăрăнас тесен пушар хăрушсăрлăх тебованийĕсене килти хушма хуçалăхра та, ĕç вырăнĕсенче те çирĕп пăхăнмалла пулать. Пушар хăрушсăрлăх требованийĕсене пăснишĕн ку таранччěнхи штраф виçисем 500–1000, 1000–2000, 10000–20000 тенкĕ пулнăччĕ пулсан, малашне çак йĕркене пăсакансен кĕсьене 1000–2000, 6000–15000, 150000–200000 тенкĕ таран çўхетме тивĕ. Çав «ĕçсенех» пушар хăрушсăрлăхĕн уйрăм режимлĕ йĕркинче тунăшăн айăплав виçисем 1000–1500, 2000–3000, 20000–30000 тенкĕрен 2000–4000, 15000–30000, 400000–500000 тенкĕне çити ўсрĕç.

20.4 статьян 3,4,5, пункчĕсем пачах та çĕнĕ. Вĕсем тăрăх килте е предприятире вутçулăмпа кĕрешме пушар хăрушсăрлăх требованийĕсене пăсса шыв тытмасан, çуртсенчи электроустановкăсем юсавсăр пулсан, вырăнсенче пушар сўнтермелли пирвайхи хатĕрсем пулмасан гражданселе 2000–3000, должноçри çынсене 6000–15000, юрлицо йĕркелемесĕр ĕçлекен предпринимательсене 20000–30000, предприяти-организацисене 150000–200000 тенкĕлĕх «парнесем» кĕтеççĕ. Эвакуаци çулĕсем тĕлĕшпе пушар хăрушсăрлăх требованийĕсене пăсни, пушар сигнализацийĕ ĕçлеменни 3000–4000, 15000–20000, 30000–40000 (юрлицо йĕркелемен предпринимательсене), 150000–20000 тенкĕлĕх штраф патне илсе пырать. Юлашкинчен асăннă икĕ йĕркесĕрлĕхе иккĕмĕш хут тупса палăртсан штрафсен виçисем 4000–5000, 20000–30000, 40000–50000 тенкĕне е ĕçе 90 кунччен чарса лартасси, 20000–40000 тенкĕне (юрлицосене) е ĕçе 90 кунччен чарса лартасси патне илсе çитереççĕ. Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăснипе ирĕке кайнă вут-çулăм ют пурлăха пĕтерсен е çын сывлăхне çăмăл е вăтам сиен кўрсен айăплав виçисем унченхи 1500–2000, 3000–4000, 30000–40000 тенкĕрен 4000–5000, 40000–50000, 350000–400000 тенкĕне çитрĕç.

Улшăнусем татах пур, анчах халĕ асăннисем районта пурăнакан кашни çыннах пырса тивеççĕ. Çавăнпа та пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассине никамăн та иккĕмĕш вырăна хăварас марччĕ.

А. ПЕТРОВ
калаçнă.

Спорт

Кубок Юнкăсенчех юлчĕ

Лоцмановсен кубокне çĕнсе илессишĕн июнĕн 3-мĕшĕнче иртнĕ футбол вăйăсем кăçалхипе 6-мĕш пулчĕç. Ярапайкассинчи вăтам шкулăн стадионĕнче виçĕ команда çеç вăй виçрĕ пулин те болельщиксем вăйăсем интереслĕ, хĕрӳ, вăйлă пулнине палăртрĕç.

Юнкăри вăтам шкулта вĕренекенсен команди виççĕмĕш çул ĕнтĕ çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ, кубока алран вĕçертмерĕ. Вĕсене спорта явăçтаракан, футболпа интереслентерекен Владимир Витальевич Михайлова – уйрăм тав сăмахĕ.

Юнкăсене çĕнтерес тесе Йӳçкассисем юлашки минутченех тăрăшрĕç. Кил хуçи – Ярапайкассинчи вăтам шкул команди – виççĕмĕш пулчĕ.

Ăмăртăва йĕркелекен Лоцмановсем, вĕсемех спонсорсем, çĕнтерӳçĕсене дипомсем тата укçан парне парса хавхалантарчĕç. Уйрăм номинацисенче палăрнă чи лайăх вылякансене те парнесем тивĕçрĕç.

Н. ИВАНОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: «Эпир – команда! Эпир – вăй!»

Маунтинбайкри çитĕнӳсем

Майăн 27-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкарта маунтинбайк енĕпе Чăваш Ен кубокĕн иккĕмĕш тапхăрĕ шучĕпе хулан уçă ăмăртăвĕ иртнĕ. Унта Муркашри В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕнче ăсталăх туптакан çамрăк спортсменсем хутшăнса лайăх кăтартусемпе таврăннă. И. Воробьев тренерăн воспитанникĕсем 1999 çулта çуралнисен тата кĕçĕнреххисен ӳсĕмĕнче ăмăртса пъедестал çинчи пур картлашкана та çĕнсе илнĕ. Анастасия Смелова 1-мĕш, Вероника Замковăпа Клавдия Максимова хыççăнхи призлă вырăнсене тухнă.

Раççей спорт маçтăрĕн кандидачĕ Надежда Антонова ăмăртура хăйĕн класне тепĕр хут çирĕплетрĕ: юниоркăсенчен чи ăсти пулнă. Унăн хĕр-тантăшĕ Ирина Портнова финиша иккĕмĕш çитнĕ.

Хамăр инф.

Милици хроникинчен

Япали пĕрре, явапĕ – пĕрле

Çул çитмен икĕ йĕкĕт тата «ĕнер кăна» 18 тултарнă каччă Калмăкри пĕр пӳрте тахçанах пăхса хунă. Шупашкарта пурăнакан кил хуçи хăçан тата ăçта пулнине те чухланă ĕнтĕ. Çапла çĕрле (ЧР 43 № саккунĕпе килĕшӳллĕн çул çитменнисен ку вăхăтра «паппа» тумалла!) «правурскерсем» пӳрт патне çитсе тăраççĕ. Пĕри форточкăран кĕрет, теприсем сыхлама тăрса юлаççĕ.

Пӳртрен мĕн илсе тухассине малтанах шутланă е çук – кун пирки каччăсем, паллах, следствие каласа парĕç. Анчах та 6100 тенкĕ тăракан фотоаппарат вăрласа тухнăшăн явапне пĕрле тытмалла пулĕ.

Болтсем кăларса илнĕ, тĕкĕрне ватнă

Анатри Панкли каччине хăй 20 çул тултарнă тĕле парне сахалрах панă-ши ĕнтĕ, тепĕр талăкран вăл ялти урамра ларакан машинăна куç хывать. Ирхи виçĕ сехет иртсен машина ураписем çинчи ултă болта кăларса илет. Çак ĕçе пурнăçланă хушăра машинăн сылтăм енчи тĕкĕрне те ватса пăрахать: 8800 тенкĕлĕх тăкак кӳрет.

Пуяс текенскер ураписене сутса яма ĕлкĕреймест. Ăна районти шалти ĕççен пайĕн «Шырав» ушкăнĕ тытса чарать. Халĕ уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Пичете районти шалти ĕççен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Тав тăватпăр

Юратнă аннене, асаннене – Хорнуй ялĕнче пурăннă Римма Семеновна Ильинана юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе пĕрле çак пысăк хуйхăна пайланăшăн пĕтĕм тăвансене, пускилсене чĕререн тав сăмахĕ калатпăр.

Ывăлĕ, мăнукĕсем.

Кредитный потребительский кооператив «СОДРУЖЕСТВО»:

ВЫДАЕТ ЗАЙМЫ ПАЙЩИКАМ
на любые неотложные цели, а также на покупку и строительство жилья с использованием средств материнского капитала. Низкие процентные ставки, доступно и оперативно;

ПРИНИМАЕТ СБЕРЕЖЕНИЯ ПАЙЩИКОВ
на привлекательных условиях. Действуют льготные ставки для пенсионеров, инвалидов.

Наш адрес: с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23 (здание ОАО «Моргаушскавтотехсервис», 2 этаж), тел.8-919-673-42-19. 4-6.

www.kpksodrugestvo.ru

ПРОГРАММА КРЕДИТОВАНИЯ РАБОТНИКОВ БЮДЖЕТНОЙ СФЕРЫ

РЕШИ САМ, СКОЛЬКО ПЛАТИТЬ ЗА КРЕДИТ!

- БЕЗ ЗАЛОГА И ПОРУЧИТЕЛЕЙ
- ПОГАШЕНИЕ НАПРЯМУЮ ИЗ З/П
- ОФОРМЛЕНИЕ НА РАБОЧЕМ МЕСТЕ

8-800-100-50-50 (ЗВОНОК БЕСПЛАТНЫЙ)
8-908-842-30-36 телефон с. Моргауши

www.bydgetniki.ru

ЗАО «Национальный бюджетный сберегательный». Лицензия ЦБРФ 019-49

Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 5-5.

Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». Установка, гарантия. 6800 руб.
Тел.: 8-905-345-77-19. 4-5.

Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф чернозем. С доставкой. Скидки.
Тел.: 8-927-668-70-15. 2-13.

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы,грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады). Питание, проживание предоставляются. Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная). Тел.: 8(8352)23-22-22. 5-5.

БЕТОН, РАСТВОР любых марок. Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778. Песок, ОПГС (гравмасса), щебень. Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440. Доставка миксерами, самосвалами. 19-50.

Паломнические поездки в Храм Архангела Михаила (с. Старое Чекурское) Дрожжановского района Республики Татарстан. Продажа билетов в здании рынка с. Моргауши в отделе «Пластиковые окна». Подробности по тел.: 8-906-387-55-78. 1-2.

Изготавливаем и устанавливаем деревенские ворота, калитки, заборы, палисадники. Дешево. Пенсионерам – скидки. Тел.: 8-905-340-20-30, 38-75-74. 4-6.

Продаем: асфальт, торф, песок (речной, карьерный), ОПГС (гравмасса), щебень (гранитный, известковый), керамзит, сосновые жерди. Тел.: 44-22-24, 8-903-358-22-24, 8-905-343-91-07. 4-6.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
скидки до 35%
подробности по телефонам: 8-9603101816
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

Реестр земельных участков, подлежащих предоставлению многодетным семьям на территории Моргаушского района

• • • /•	Местоположение, адрес	• •	Площадь земельного участка га	Вид разрешенного использования земельного участка
Александровское сельское поселение				
1-1	Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, с. Александровское	21:17:250301:110	0,2	для ведения личного подсобного хозяйства
Сятракасинское сельское поселение				
8-1	Чувашская Республика, Моргаушский район, с/пос Сятракасинское	21:17:170901:613	0,12	для ведения личного подсобного хозяйства
Хорнойское сельское поселение				
10-1	Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д. Хорной	21:17:140102:197	0,2	для ведения личного подсобного хозяйства
Ярославское сельское поселение				
15-1	Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы	21:17:130103:180	0,2	для ведения личного подсобного хозяйства

Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.

* * *

Отруби, комбикорма, ячмень. Доставка от 1 т. Тел.: 89603013479. 2-5.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус, цемент, шифер, профнастил (крашеный, оцинкованный). Обращаться: «Рука мастера», с. Моргауши.
Тел.: 8-903-346-40-58. 5-5.

* * *

Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), асфальт. Возможна доставка.
Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 3-8.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 1-5.

* * *

Срочно требуются рабочие строительных специальностей, разнорабочие в г. Москву. Проживание, питание. Зарплата по договоренности. Тел.: 8-967038-33-88 Николай, 8-967-04-04-400 Антон, 8-965-133-33-36 Александр.

* * *

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 6-8.

* * *

Куплю корову, бычка, телку.
Тел.: 8-905-342-39-43. 4-7.

* * *

Изготовление пластиковых ОКОН по вашим пожеланиям быстро, качественно, по низким ценам.
Тел.: 8-927-668-58-89, 38-58-89. 2-5.

* * *

Куçарса каймалли 4мх3м калăпăшлă çĕнĕ мунча сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-919-665-04-32.

* * *

ТЦ «Лотос» продает: профнастил, трубы для столбов, сетку-рабицу, профиль, банные печи, мотоблоки и прицепы. Доставка и сварочные работы (д. Рыкакасы). Тел.: 8-917-665-27-26. 5-5.

* * *

Продаю пропаренные качественные керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, керамзит, цемент. Адрес: «Моргаушагропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 5-5.

* * *

Продается речной песок, гравмасса. Доставка. Недорого. Тел.: 8-927-858-13-50. 4-5.

* * *

Продаю песок, гравмассу, щебень, торф. Доставка.
Тел.: 8-961-344-08-38. 4-5.

* * *

Реализуем песок речной, щебень разных фракций по низким ценам. Возможна доставка.
Тел.: 8-937-384-06-50. 4-12.

* * *

Урпа сутатăп. Выльăх туянатăп.
Тел.: 8-919-671-96-26. 3-5.

* * *

Продаю радиаторы алюминиевые «Vektor» (Россия) и биметаллические «Tenrad» (Германия) новые в упаковке. Тел. 8352-378650.

* * *

7 июня открылся магазин «Автозапчасти» по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 25 (территория «Агропромснаба»). Большой ассортимент товаров на автомобили: ВАЗ, ГАЗ, УАЗ, иномарки. Тел.: 8-927-859-45-93. 2-2.

* * *

Продается козочка зааненской породы. Возраст 2,5 месяца. Тел.: 8-927-840-39-69.

* * *

Вăкăрсем, тынасем, пăрусем, сурăх-така туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57.

* * *

Продается новая двухкомнатная квартира новой планировки с пластиковыми окнами, отопление индивидуальное, в центре с. Большой Сундырь. Цена договорная. Звонить по тел.: 8-937-375-98-90. Наталия.

* * *

Итоги проведения публичных слушаний по проекту муниципального правового акта

«Об изменении разрешенного использования земельного участка» на территории Москакасинского сельского поселения Моргаушского района ЧР.

08 июня 2011 года прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта « Об изменении разрешенного использования земельного участка».

На указанных выше публичных слушаниях было принято следующее решение: одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

Глава администрации Москакасинского сельского поселения Моргаушского района А.Н. МАТРОСОВ.

МОТОБЛОКИ
Навесное оборудование, прицепы к мотоблокам
0% за кредит
0% первый взнос
24 срок кредита, мес
мотоблоки от 15 000 руб.
БЫТОВАЯ ТЕХНИКА Лидер
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ
с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. 5-10.
ШИРОКИЙ ВЫБОР, ВЫГОДНЫЙ КРЕДИТ, ДОСТАВКА!

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36? E-mail, morpress@cbxĕruĔ redaction@cbxĕru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управлениийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрахчисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 10.06.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4337.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.